# Тăван çĕршывăм - Чăваш ен

*Иван Аршинов кĕвви*

Хастар утатăн канăçа пĕлмесĕр,
Ятна-сумна çуллен çĕклен.
Хăват çумне хăват хушатăн эсĕ,
Тăван çĕршывăм - Чăваш ен.

Алран кайми аки-сухи кĕтесĕ
Ёçпе туптаннă ĕмĕртен.
Чун-чĕрӳпе патвар та ырă эсĕ,
Тăван çĕршывăм - Чăваш ен.

Пуçа тайса аттем тесе чĕнес-и,
Аннем теес-и чĕререн?
Пире чипер кун-çул сунатăн эсĕ,
Тăван çĕршывăм - Чăваш ен.

*Сементер, Ю. Тăван çĕршывăм – Чăваш ен : [юрă] / Юрий Сементер сăвви ; Иван Аршинов кĕвви // Сементер Ю. Чăваш пики : юрăсем. – Шупашкар, 2002. – С. 48.*